Шавлы С. Константин Ивановăн юлашки сăмахĕ : [сăвă] / Стихван Шавлы // Сунтал. – 1940. - № 9. – С. 9.

*СТИХВАН ШАВЛЫ*

# КОНСТАНТИН ИВАНОВĂН ЮЛАШКИ СĂМАХĔ

Халь маншăн сурчăк сĕмсĕр цензор;
Писсе хускалнă кăмăла тăкам:
Хĕрес хывман атеист пек, пупсемсĕр
Эп нўрлĕ шăтăка кусам.
Юлашкинчен хăть ан варлаччăр,
Ан хăласланччăр
Шалпар шăналăк-сана сиплетсе,
Шăча пăлмен куçĕсене те ан
çăтăлантарччăр: —
«Укçа, укçа, укçа!..» тесе.
Ман гонорарăм çук; пĕр пус та
сыхлаймарăм.
Упранă ылттăнăм—хутсен тĕрки.
Ăна эп халăхшăн тĕрлерĕм,
Укаларăм,
Пупсем валли—хăлха чикки!
Мана Сетнерĕмсем пытарччăр,
Катан-пир тăхăнтарччăр Нарсписем;
Вĕсем тăпрам çинче: «Тăхтамансем
пăчланччĕр!»
Тесе сăмах калаччĕр;
Куç йăтаймасăр чĕтĕреччĕр тăшмансем.
Пуç вĕçĕнче хĕрес ан кăвакартăр,
Чĕр чух эп пăталаннă ун çумне,—
Вăштăртатса пилеш кулкки шавлатăр,
Юнне тумлаттăр чул юпа çине.
Чун усрасси, тен, пĕр сехет-тĕр—
Çывхар,
Çунатлă Муза—
Тăлăх тусăм.
Сывпуллашар,
Жандарм хупасран пĕр шикленмесĕр,
Юлашки хут хăть уççăн калаçар.
Эс астăватăн-и: Некрасов курнă
Сан йăмăкна Мускав урамĕнче;
Ăна саламатпа хĕненĕ
Урнă
Палач пур халăх умĕнче.
Илтетĕн-и: чăваш йăмăкусем макраççĕ,
Телей шыраççĕ,
Тупмасан—сывпул тĕнче!
Тип варсене каяç те уртăнаççĕ
Йăмра туратĕнчен.
Пырсамччĕ, Атăл хĕрне пыр эс,—
Виле сулли ишет Аçтăрхана:
Кашта —
Пĕр ват чăваш тата ик вырăс
Пыраççĕ сулланса. Ан хуп куçна!
Нумай çулсем пăлхавçăсем анаççĕ:
Мĕн Разинран вара!
Çилсем тулласçĕ,
Шăхăраççĕ,
Иĕри-тавра—
Хура, хура...
Сĕм авалтан эс пурăнан, чĕкеçĕм,
Тус пулнă эс Гомерпала.
Юлашкинчен кала,
Тăванăм, чиперккеçĕм,
Ман утмаллаччĕ хăш çулпала?!
Шавларĕ Чĕмпĕр. Шкул пăлханчĕ.
Аçта-ши пиллĕкмĕш çулсем?!
Çурт тăрринче хăмач хумханчĕ...
Аçта-ши халь шкултан кăларнисем?
Тен, хăшĕ вăрçăра пуль, офицер-тĕр...
Тепри хăйрать пуль, тен, тĕрме решеткине...
Эп хăтараймăп çамрăклăх тусне,—
Тĕнче кисрентĕр! —
Мана шăлтарчĕç библи тусанне.
Ялаплăха çухалчĕ,
Ванчĕ
Шанчăк,
Миçе çĕр юрă сўнчĕ ăшăмра?!
Туберкулез кышларĕ, выçă анчăк,
Вăл çирĕмтăваттăра
Ўкерчĕ ураран.
Тўре-шара,
«Чи ырă пиллĕх» çав пулас сан
Тавсси, чуралăх самани!
Сана, ура çине тăрас пулсассăн,
Тавру тыттарăттăмччĕ, кĕрт ами!
Эп тавăрăттăм Пушкиншăн,
Декабристсемшĕн,
Эп тавăрăттăм Лермонтовшăн та,
Эп тавăрăттăм Çĕпĕрелле утнисемшĕн...
Пўрмен,
Шăпам ўкмен.
Ура вĕçне шăнтать...
Çитет иккен
Хура юлташăм. Сывлăш пўлĕ...
Çур çул кĕтеп... Хăрса кĕллениччен,
Ма вăрçăра, асаттене пек, вилĕм
Мана кĕтмен-ши Франци çĕрĕнче?
Калаpĕ — «вăрçăра!..»
Вара
Ман камшăн пуç хурасчĕ?
Сетнершĕн-и,
Е императоршăн-и? —
Тронне кышлаччăр
Йĕке-хўрепеле шăши!
Ĕнтĕ çулталăк çапăçать патшамăр;
Вăрçа, вăрçа хăвать вăл халăха.—
Пуçчашкисен туне купаяăр! —
Пин-пин ача юлать ав тăлăха.
Пĕр туртăшать империпе импери.
Усси кама? Сухапуç чăвашне-и?
Тырри ўсет ун ав имшерĕн —
Ма ешермест çава лекмен ĕшненĕн?
Ма пўлмисем ун пушă, куçĕ пўрлĕ,
Ма пўлĕх ун хутне кĕмест?
Ма сăлăп янă алăк урлă
Çич çул çитерне айăр кĕçенмест?!.
Чĕре çунать...
Ула тĕс ялавшăн-и
«Урра» тăсса,
Ура хуçса
Вăрçа кĕрем?!
Кровать çинчех кышлатăр чир шăни,
Çапах та парăнмасăр вилем!
Хăлат пек эп çĕклентĕм
Поэзи тўпине,
Поэзи алтăрне тўнтертĕм,
Эп ĕçрĕм унăн шерпетне.
Мĕскĕннисемшĕн сас çĕклерĕм
Çăхан пуçĕ çине тăрса.
Чĕрнисемпе вăл витĕр сенĕклерĕ,
Вăл чĕлхене те ывăтрĕ касса...
Эп аттере те тўрлĕх тулаймарăм,
Вăл хўтлемерĕ ылттăн кĕмĕлпе:
Хам ĕмĕрте те тинĕс кураймарăм,
Эп çўреймерĕм унăн хĕррипе,—
Эп сывлаймарăм сиплĕ сывлăш.
Кил сĕрĕмне те çăтмăп тек...
Çырмасенче саралчĕ хăмăш,
Шыв кукринче хăрса ўкет чечек...
Ĕмĕрлĕхе сывпул, Çунатлă Муза,
Чăваш ялĕсене вĕçтер эс, тăлăх тусăм,—
Ĕпхўпеле Самар таран,
Чĕмпĕрпеле Хусан таран,
Ват Шупашкар таран
Пĕлтер чăваш йышне:
Сан ывăлу куç хупрĕ, те,
Пĕр вăхăтсăр пуçне çухатрĕ, те.